27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944
АВГУСТ
30
ЮНКУН
171(6666) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Арми генералне ТОЛБУХИНА Адмирала ОКТЯБРЬСКИЕ

УКРАИНĂРИ 3-мĕш фронт çарĕсем, моторизованнăй тата танковăй соединенисем питĕ хăвăрт наступлени туса пынине пула, ХУРА ТИНĔС флочĕн карапĕсемпе тата десант чаçĕсемпе пĕрле çыхăнса кĕрешсе, паян, августăн 29-мĕшĕнче, Хура тинĕс хĕрринчи питĕ паха порта КОНСТАНЦА хулине, виçĕ çул хушши фашистла нимĕç захватчикĕсен тинĕс-çар флочĕн тĕп бази пулнăскерне, туртса илнĕ.

КОНСТАНЦА хулипе портне туртса илнĕ чухне ГАГЕН генерал-лейтенантăн, КОСОБУЦКИЙ генерал-майорăн, ЗАВЬЯЛОВ подполковникăн, ШЕВКИН майорăн, КУЗНЕЦОВ полковникăн, ЛИСИЦЫН генерал-майорăн, БЕЛИНСКИЙ полковникăн, ВЛАСОВ полковникăн, СМИРНОВ полковникăн çарĕсем; танковăй çарсен генерал-лейтенанчĕн СУХАРУЧКИНĂН, ШЕВЧЕНКО полковникăн танкисчĕсем; артиллери генерал-майорĕн БРЕЙДАН, БАТЛЯЕВ подполковникăн артиллерисчĕсем; I-мĕш рангри капитанăн ЧУРСИНĂН, I-мĕш рангри капитанăн СОЛОВЬЕВĂН, I-мĕш рангри капитанăн ДЕРЕВЯНКĂН, I-мĕш рангри капитанăн СВЕРДЛОВĂН, II-мĕш рангри капитанăн ДЬЯЧЕНКĂН, II-мĕш рангри капитанăн ПРОЦЕНКĂН, II-мĕш рангри капитанăн ДАВЫДОВĂН, III-мĕш рангри капитанăн ГНАТЕНКĂН, КАТАНОВ майорăн, МАКАРОВ капитанăн морякĕсем; авиаци генерал-полковникĕн СУДЕЦĂН, авиаци генерал-лейтенанчĕн ЕРМАЧЕНКОВĂН, КОРЗУНОВ полковникăн, РОЖДЕСТВЕНСКИЙ подполковникăн, АВДЕЕВ подполковникăн, КОНАРЕВ полковникăн, КРУЧЕННЫХ майорăн летчикĕсем; инженери çарĕсен генерал-полковникĕн КОТЛЯРĂН, ИВАНОВ полковникăн саперĕсем; çыхăну çарĕсен генерал-лейтенанчĕн КОРОЛЕВĂН, СТАРОЛЕТОВ полковникăн связисчĕсем чапа тухнă.

Тунă çитĕнĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, КОНСТАНЦА хулипе портне туртса илнĕ чухне уйрăмах чапа тухнă çар соединенийĕсене, флотăн карапĕсемпе чаçĕсене «КОНСТАНЦСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, августăн 29-мĕшĕнче, 24 сехетре, хамăр Тăван çĕршыв столици МУСКАВ, икçĕр çирĕм тăватă тупăпа çирĕм хут пĕр харăс персе, УКРАИНĂРИ 3-мĕш фронтăн паттăр çарĕсене, ХУРА ТИНĔС флочĕн карапĕсемпе чаçĕсене, КОНСТАНЦА хулипе портне туртса илнĕскерсене, Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан çарсене, карапсемпе чаçсене, КОНСТАНЦĂНА туртса илнĕ çĕрте пулнăскерсене питĕ чаплă çапăçнă шăн ТАВ ТĂВАТĂП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1944 çулхи августăн 29-мĕшĕ.

Стахановецсен хăватлă çарне малалла ÿстерсе пырассишĕн

Совет халăхĕ паян стахановла юхăм пуçланнăранпа тăхăр çул тултарнине палăртать. Тăхăр çул каярах, 1935 çулхи августăн 30-мĕшĕнче çĕрле, Донбасри забойщик Алексей Стаханов кăмрăк касас енĕпе рекордлă çĕнтерÿ туса пĕтĕм халăхăн хăватлă юхăмне пуçарнă. [illegible]

[illegible] хуçалăхне хăвăрттăн вăрçа тивĕçлĕ пек йĕркелеме, Хĕрлĕ Çар валли техникăпа боеприпассем, снаряжени тата апат-çимĕç туса кăларассине хăватлăн ÿстерме май пачĕ. Инженерсемпе техниксем, стахановецсен йышлă çарĕпе пĕрле, хуçалăхăн пур отраслĕсенче те ĕç тухăçлăхне малалла ÿстерсе пыма çĕнĕ те çĕнĕ майсем тупаççĕ.

Володин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен заводра поточнăй методпа ĕçлеме тытăннă хыççăн пĕр рабочи продукци туса кăларасси, 1943 çулхипе танлаштарсан, 260 процента çити ÿснĕ, продукцин хăйне ларакан хакĕ 58 процент йÿнелнĕ. Канашри вагонсем юсакан заводри Забиякин юлташ начальник пулса ĕçлекен цехра, ĕçе стахановецсен опычĕпе организацилесе, нумай станокпа ĕçлессине сарнă май 53 çынна урăх ĕçе куçарма пултарнă, çав вăхăтрах продукци кăларассине 40 процент ÿстернĕ. Якунин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен заводра нумаях пулмасть ĕçе кĕртнĕ çĕнĕ нормăсене сборочнăй цехсен коллективĕсем 140 процент таран тултараççĕ.

[illegible] организацийĕсем, хуçалăх руководителĕсем, стахановла юхăмăн нумай çул хушшинче пухăннă пуян опычĕпе туллин усă курса, производствăн кашни участокне сехет пек тĕрĕс ĕçлекен тума тивĕçлĕ. Стахановла юхăм пĕр вырăнта тăнине чăтма пултараймасть. Стахановецсен опытне сарса пымалла, вĕсен опычĕпе çамрăксене ĕçлеме вĕрентмелле. Пĕрмаях малалла кайма, топливопа электроэнергине, чĕртаварсене перекетлеме, ĕç тухăçлăхне хăпартсах пыма, ик-виçĕ норма тултаракан стахановецсен йышне ÿстерме çĕнĕ те çĕнĕ майсем тупмалла. Çав майсем ĕçре большевикла йĕркелĕх тунинче, дисциплинăна çирĕплетнинче, рабочисем хушшинче политикăллă воспитани ĕçне лайăх йĕркеленинче пулаççĕ.

Стахановла юхăм — совет халăхĕн хăватлă юхăмĕ. Ленин—Сталин партийĕ чĕртсе çитĕнтернĕ стахановла юхăм Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн пыракан Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче Хĕрлĕ Çарăн çĕнтерÿ хĕçпăшалне туптама май туса пачĕ. Стахановла юхăма малалла аталантарса пыни телейлĕ те çутă куна — çĕнтерÿ кунне çывхартма пулăшĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

АВГУСТĂН 28-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Августăн 28-мĕшĕнче пирĕн çарсем ВАЛГА хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре, тăшманпа çапăçса, ГУЛБЕНЭ хулипе чугун çул узелне туртса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 40 пункта ытла йышăннă, вăл шутра — ВИРА, ЛЫЗЕСКРОГС, ЗЕЛТЫНИ, ЯУНРУТЕЛИ, БЕЛЯВА, СТАМЕРИЭНА, ВЕЦГУЛБЕНЭ ятлă ялсем тата КАЛНЫЭНА, СТАМЕРИЭНА, МЕЛНУПЕ чугун çул станцийĕсем.

ЛОМЖА хулинчен кăнтăртарахра пирĕн çарсем, тăшман хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкса, шоссе çулĕсен пысăк узелне — ОСТРУВ МАЗОВЕЦКИ хулине туртса илнĕ, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан ытти 50 пункта ытла йышăннă, вăл шутра — ПИСКИ, ЧЕРВИН, ЛЯСКИ, ЕЛЕНЕ, СТОК, ЛЕГИОНОВО, КОЗИКИ, НАГОШЕВО, ОСУХОВОНОВЕ, БРОК, БОЯНЫ, УДЖИН ятлă ялсем тата ОСТРУВ МАЗОВЕЦКИ ятлă чугун çул станцийĕ.

ПРАГĂРАН çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн çарсем тăшман пехотипе танкĕсен атакисене ăнăçлăн сирсе янă.

УКРАИНĂРИ 2-мĕш фронт çарĕсем çаплах наступлени туса пынă, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан 150 пункта ытла туртса илнĕ, вăл шутра — БРЕЦКУ, ГОЙОАСА, ДАРМАНЕШТИ, ДОФТЯНА, ГРОЗЕШТИ, ХЫРЖ, ПОЯНА СУРАТА, ГУРА ВЕЙ, ЦЫФЕШТИ, ДУМИТРЕШТИ, ПЛЕВЕШТИ, БОГЗА, ОБИЛЕШТИ, НЫНЕШТИ, ТУДОР ВЛАДИМИРЕСКУ ятлă пысăк ялсем тата ГОЙОАСА, АСЕУ, УЗВЕЛЬД, УМБРАРЕШТИ, ЛИЕШТИ, ТУЗОР ВЛАДИМИРЕСКУ ятлă чугун çул станцийĕсем. Августăн 28-мĕшĕнчи çапăçусенче фронт çарĕсем 6.000 нимĕç салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ.

УКРАИНĂРИ 3-мĕш фронт çарĕсем августăн 28-мĕшĕнче ДУНАЙ çинчи пысăк порта — БРАИЛОВ хулине туртса илнĕ, çавăн пекех тата КОСТАКЕ НЕГРИ, КИШМЕЛЕ, ИНДЕПЕНДЕНЦА, БРАНИШТЯ ятлă ялсене тата ИНДЕПЕНДЕНЦА, ШЕРБЕШТИ ятлă чугун çул станцийĕсене тытса илнĕ. Фронт çарĕсем фашистла нимĕç çарĕсен КИШИНЕВ хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре çавăрса илнĕ группировкине пĕтĕмĕшпех пĕтерсе тăкнă. Августăн 28-мĕшĕнче УКРАИНĂРИ 3-мĕш фронт çарĕсем 5.000 нимĕç салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ.

ХУРА ТИНĔС флочĕн карапĕсемпе десант чаçĕсем, ăнăçлă операци туса, ДУНАЙ шывĕ урлă каçнă та ДУНАЙ çинчи ТУЛЬЧА хулипе портне тата захватчиксен ХУРА ТИНĔС çинчи питех те паха тинĕс-çар базине СУЛИНА хулине туртса илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса çÿренĕ тата чылай пунктсенче тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Августăн 27-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕн пур фронтсенче нимĕçсен 83 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 41 самолетне персе ÿкернĕ.

☆ ☆ ☆

Валга хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн çарсем тăшманпа çапăçса, малалла куçса пынă. Тăшман оборонин тăрăхне çĕмĕрсе тăкса, совет чаçĕсем çав тери хăвăрт атакăланă та Гулбенэ хулине туртса илнĕ. Пирĕн çарсем пыра-пыра çапнипе каялла чакакан тăшман çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен пысăк çухату тÿсет. Пĕр участокра кăна нимĕçсене пĕр батальона çити пĕтерсе тăкнă, вĕсен 11 танкĕпе хăй тĕллĕн çÿрекен туппине персе çĕмĕрнĕ.

* * *

Ломжа хулинчен кăнтăртарахра нимĕçсем шоссе çулĕсен пысăк узелĕ пулса тăракан Остув Мазовецки хули патне пымалли çулсем çинче хытă хирĕç тăрса çапăçнă. Совет чаçĕсем нимĕçсене Хĕвеланăç Буг шывĕн çурçĕр хĕррипе пырса çапнă та тăшманăн тĕреклетнĕ пунктне — Брок местечкине туртса илнĕ. Çине тăрсах малалла куçса пырса, пирĕн çарсем Остров Мазовецки хули хĕррине вăркăнса кĕрсе кайнă. Малтанхи позицисене каялла туртса илме хăтланса, тăшман темиçе хутчен те контратака тунă. Совет чаçĕсем тăшман контратакисене пурне те сирсе янă та Остров Мазовецки хулине штурмласа туртса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 50 пункта ытла йышăннă. Остров Мазовецки хулишĕн пынă çапăçусенче тăшман йывăр çухату тÿснĕ. Нимĕçсен 26 танкне, хăй тĕллĕн çÿрекен 2 туппине, 16 хир туппине, 20 миномётне тата 90 пулеметне пĕтерсе тăкнă. Трофейсем тытса илнĕ, тыткăна илнисем пур.

Советсен летчик-штурмовикĕсем тăшманăн фронталла пыракан колоннине атакăланă. Бомбăсем пăрахса тата тупăсемпе, пулеметсемпе персе, горючи тултарнă 20 автоцистернăна пĕтерсе тăкнă. Кун каçиччен сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 19 самолетне персе ÿкернĕ.

* * *

Висла шывĕн сылтăм хĕрринче Варшавăпа юнашар ларакан Прагăран çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре тăшман танкĕсемпе пехоти ирхине ирех пĕр соединенин позицийĕсене атакăланă. Хаярран çапăçнă хыççăн гитлеровецсене каялла хăваласа янă. Ку районра нимĕнле çитĕнÿсем те тăвайманнине кура, нимĕçсем хăйсен вăйĕсене урăхла ушкăнланă та тепĕр участокра вăйлă атакăсем пуçласа янă. Совет чаçĕсем тăшмана пур тĕрлĕ хĕçпăшалпа та вăйлăн пеме тытăннă. Гитлеровецсен ирĕксĕрех каялла чакма лекнĕ. Çапăçу хирĕнче нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсен 600 вилли ытла выртса юлнă.

Пирĕн авиаци, çĕр çинчи çарсемпе килĕшсе çапăçса, нимĕçсен хăй тĕллĕн çÿрекен 10 туппине тата 20 автомашинине пĕтерсе тăкнă. 6 артиллери батарейипе миномётсен батарейине пусарса лартнă, 2 боеприпас складне тата пĕр горючи складне сирпĕнтерсе янă. Нимĕçсен пехотин темиçе колоннине сапаласа янă.

* * *

Украинăри 2-мĕш фронт çарĕсем çаплах ăнăçлă наступлени туса пынă. Пĕр соединени чаçĕсем Пятра хули районĕнче тăшманăн çирĕплетнĕ районне туртса илнĕ. Кунта нимĕçсен бетонран тунă темĕн чухлĕ дот пулнă. Нимĕçсен 20-мĕш танковăй дивизине аркатса тăкнă. Çав дивизири 2.000 нимĕç ытла тыткăна парăннă. Çавăн пекех тата нимĕçсен 3-мĕш горно-стрелковăй дивизийĕ те пысăк çухату тÿснĕ. Пирĕн çарсем, Карпат тăвĕн кăнтăр-хĕвелтухăçĕнчи йÿпписем урлă каçса, Брецку хулине туртса илнĕ. Нимĕçсемпе венгерсен çарĕсене халăх пурăнакан ытти пунктсенчен те хăваласа кăларнă.

* * *

Украинăри 3-мĕш фронт çарĕсем нимĕç çарĕсен Кишинев хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре çавăрса илнĕ группировкин юлашкийĕсене пуçĕпех пĕтерсе тăкнă. Совет чаçĕсем Галац хулине илнĕ хыççăн 25 километр малалла кайнă та Браилов хулине штурмласа туртса илнĕ. Нимĕçсем пирĕн çарсене хушăри позицисем çинче чарма хăтланнă, анчах та вĕсене пысăк çухатусем кÿрсе сирсе янă. Браилов хули Румынин чи пысăк хулисенчен пĕри пулса тăрать, вăл—Дунай çинчи паха порт.

Браилов портне тинĕсре çÿрекен пысăк суднăсем те кĕме пултараççĕ. Пирĕн Браилов хулине туртса илнĕ çарсем нимĕçсенчен трофейсем нумай тытса илнĕ.

Хура тинĕс флочĕн карапĕсемпе десант чаçĕсем Тульча хулипе портне туртса илнĕ. Тинĕс пехотин десанчĕсем нимĕçсен Хура тинĕс çинчи тинĕс-çар базине — Сулина портне йышăннă.

* * *

Карели фронтĕнче, Татарников майор командир пулса ертсе пынипе, пирĕн виçĕ истребитель нимĕçсен 14 бомбардировщикне атакăланă. Бежанов кĕçĕн лейтенант нимĕç самолетне хыçалтан пырса çапса çĕре персе антарнă. Унтан Бежанов юлташ тăшманăн иккĕмĕш самолетне атакăланă та ăна вут тивертсе янă. Кĕçĕн лейтенант Бежанов кун каçиччен тăшманăн 4 самолетне персе ÿкернĕ.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотисене пани

Августăн 28-мĕшĕнче Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. А. Андреева юлташ наградăланисен ушкăнне ЧАССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотисене панă.

Производствăра тÿрĕ кăмăлпа лайăх ĕçленĕшĕн Хисеплĕ грамотăсем Етĕрнери çу заводĕнчи сĕт пухакансем К. И. Ивановпа В. Е. Скребков тата Д. А. Шаликова, Ишлей районĕнчи «Гвардия» колхозри сĕт пухакан А. А. Курбатова, Çĕрпÿри çу заводĕнчи сĕт пухакан З. М. Михеев юлташсем илнĕ.

Ун хыççăн производствăра хастарлă ĕçленĕшĕн Хисеплĕ грамотăсем Красноармейски районри работница И. И. Орлова, Сĕнтĕр районĕнчи çу заводĕнчи мастер П. М. Прокопович, производство ыйтăвĕсене лайăх тивĕçтерсе пынăшăн Чăвашмаслопромăн Канашри базин бухгалтерĕ В. М. Рыбаков, промышленность предприятийĕсене активлăн пулăшнăшăн Елчĕкри çу завочĕн инспекторĕ В. И. Моско юлташсем илнĕ.

Наградăланисем, хăйсен ĕçне пысăка хурса хакланăшăн партипе правительствăна тав туса, фронта лайăх пахалăхлă продукци ытларах парассишĕн татах та пикенерех ĕçлеме шантарса каланă.

Юлашкинчен Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. А. Андреева юлташ, наградăланисене саламласа, малашнехи ĕçре çитĕнÿ тума ырă суннă.

ТАСС опроверженийĕ

Ют çĕршыв хаçачĕсенче çакăн пек сăмах сараççĕ: Болгари правительстви вăрçа нихăшин майлă та хутшăнмасăр тăма пулса пĕлтернине Совет правительстви йышăннă та ăна ырланă пулать вара.

ТАСС çапла пĕлтерме полномочи илнĕ: çав сăмахсем вĕсем чăн мар, мĕншĕн тесен советăн ертсе пыракан ушкăнĕсем Болгари правительстви вăрçа нихăшин майлă та хутшăнмасăр тăма пулса пĕлтернине халĕ пулса тăнă лару-тăрура пачах çителĕксĕр тесе шутлаççĕ.

Торф предприятийĕнчи стахановецсем

Пирĕн Иваново облаçĕнчи «Озерное» ятлă торф кăларакан предприятире Чăваш республикинчен килнĕ 200 рабочи ĕçлеççĕ. Вĕсем ĕç техникине кĕске вăхăтрах вĕренсе çитрĕç. халĕ ĕнтĕ стахановла ĕçлеççĕ.

Шăхасан районĕнчен килнĕ М. Владимирова юлташ ертсе пыракан бригада ĕç тухăçлăхне уйăхран уйăха ÿстерсе пырать. Çапла, унăн бригади производство планне май уйăхĕнче 113 процент тултарнă пулсан, июнь уйăхĕнче 165 процент, июль уйăхĕнче вара 202 процент тултарчĕ. Владимирова юлташ бригадине социализмлă ăмăртура мала тухнăшăн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялав панă тата укçапа премиленĕ.

Çав районри Ухманти «Победа» колхозран килнĕ М. Герасимова юлташ ертсе пыракан бригада та Владимирова бригадинчен нумай кая юлмасть. Унăн бригади плана май уйăхĕнче 122 процент, июньре 165 процент, июльре 172 процент тултарчĕ.

Улатăр районĕнчи Стемас ялĕнчен килнĕ З. Кузьмина, Шăхасан районĕнчен килнĕ О. Петрова, М. Егорова юлташсен бригадисем те плана яланах ирттерсе тултараççĕ. Вĕсене преми йĕркипе темиçе çĕр метр мануфактура панă.

Чăваш хĕрĕсем хăйсен паттăр ĕçĕпе фронта куллен кун ытларах пулăшаççĕ, республика чысне çÿлте тытса тăраççĕ.

Ÿкерчĕк çинче: М. Владимирова (сулахайри) тата М. Герасимова (сылтăмри).

САХАРОВ,
ВКП(б) Иваново Обкомĕн «Озерное» торф предприятийĕнчи парторгĕ.

Çамрăк стахановецсен пуçарăвĕ

Таня тата Зоя Федоровăсем иккĕшĕ те Якунин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен заводра вăрçă вăхăтĕнче ĕçлеме тытăннă. Нимĕнпе те палăрса тăман вĕсем заводри ытти хĕрачасенчен. Малтанах професси туяннă, ĕçе хăнăхса пынă. Халĕ ĕнтĕ вĕсем çинчен пĕтĕм завод коллективĕ пĕлет.

Хăйсен хастарлă ĕçĕпе, стахановла ĕçпе чапа тухнă вĕсем. Çĕршывра çамрăксемпе комсомолецсен бригадисем ÿсме пуçласанах, Таня Федорова хăйĕн юлташĕсене пухнă та бригада организацилесси çинчен канашлама пуçланă.

— Ытти хĕрсем епле лайăх ĕçлеççĕ,— тенĕ вăл, — эпир мĕншĕн кайра сĕтĕрĕнсе пыратпăр? Эпир те лайăх ĕçлеме пултаратпăр вĕт.

Хĕрсем килĕшнĕ, бригада организациленĕ. Халĕ Таня Федорова бригадăра мĕнле ĕçлени çинчен çапла каласа парать:

«Эпир малтанах хамăрăн ĕçе тĕрĕс организацилерĕмĕр, ĕç вырăнне йĕркене кĕртрĕмĕр. Çавăн хыççăнах пирĕн ĕç те ăнăçлăн пулса пыма пуçларĕ. Июнь уйăхĕнче манăн бригада нормăна нумай ирттерсе тултарчĕ. Июль уйăхĕнче çĕнĕ нормăпа ĕçлеме тытăнсанах, ăна 250—275 процент тултарма пуçларăмăр. Ĕç ăнăçлă пыни пирĕн туслăха çирĕплетрĕ. Эпир завод коллективĕн интересĕпе, çĕршыв интересĕпе пурăнма пуçларăмăр».

Июль уйăхĕнче Таня Федоровăна сменăри мастер туса хунă. Унăн вырăнĕнче бригадир пулса Зоя Федорова ĕçлет. Бригада халĕ те малта пырать, заводри куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялава темиçе уйăх ĕнтĕ хăй аллинче тытса тăрать.

Таня Федорова юлташ ертсе пыракан бригада пек бригадăсем сахал мар кунта. Вĕсен йышĕ ÿснĕçемĕн ÿссе пырать. Комсомолецсемпе çамрăксен бригадисем, фронта ытларах пулăшас туйăмпа ĕçлесе, продукци туса кăларассине ÿстерсе пыраççĕ. Шимлых юлташ ертсе пыракан бригада, ĕç тухăçлăхне ÿстерсе пынă май, икĕ çынна урăх ĕçе куçарма пултарнă. Кун пек примерсене тата та нумай илсе кăтартма пулать.

Комсомолецсемпе çамрăксен бригадисем, Хĕрлĕ Çарăн çĕнтерĕвĕсемпе хавасланса, Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртăва пуçарса яма йышăннă. Вĕсем Октябрь уявĕччен çĕнĕрен 30 бригада организацилеме, производство планне 160 процентран кая мар тултарма, ĕç тухăçлăхне 10 процент ÿстерме, брак пулассине пĕтерме, пурне те техника вĕренĕвне явăçтарма сăмах панă. Вĕсен сăмахĕ çилпе вĕçсе кайман. Нумай çамрăксем нормăна икĕ-виçĕ хут ирттерсе тултараççĕ. Çапла, слесарь Димитренко юлташ виçĕ норма таран тултарать.

Çамрăк стахановецсен пархатарлă опычĕ завод коллективне çĕнĕ çитĕнÿсем тума пулăшать.

М. БОГДАНИН.

ИЗМАИЛА ИЛНИ

ÇАПАÇУРИ ÇАР, августăн 26-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Бендеры патĕнче çÿллĕ сăрт пур, ăна «Суворов курганĕ» тесе ят панă. Çав курган çинче Измаил хулипе крепоçне штурмланă чухне пĕр паллă мар герой тăратса лартнă хĕрлĕ флаг вĕлкĕшсе тăрать. Унта хăпарсан, темиçе вунă километр тăсăлса выртакан Бессараби çеçенхирне курма пулать. Пур еннелле те çулсем каяççĕ. Çав çулсем, ансăр лентăсем пек, çырмасем урлă каçа-каçа каяççĕ, сăртсем тавра çавăрăна-çавăрăна илеççĕ, вĕсем çине хăпарса каяççĕ.

Çав çулсемпе пыратăн та санăн умăнта истори страницисем уçăлса пынă пекех туйăнать. Кунта Суворовпа Кутузов пулнă. Кунта Дунай шывĕн леш енне Наливайко запорожецĕсем каçа-каçа кайнă. Кунта вырăс çарĕсем пĕр хут çеç мар çапăçнă, пĕр хут çеç мар çĕнтернĕ. Ялсен, юханшывсен, сăртсен авалхи ячĕсем тата авалхи ишĕлчĕксемпе памятниксем çав кунсене аса илтереççĕ. Тахçан авалтан пыракан калавсене, вырăс салтакĕшĕн çав тери паха пулса тăраканскерсене, Бессарабири нумай ялсенче халь те илтме пулать. Бендеры хулинчен аякрах мар вырăнта пĕр старик-модлаванин пире Потемкин курганне, Мазепа сутăнчăкăн вилĕ тăприне, Швецин Петр патша аркатса тăкнă 12-мĕш Карл королĕ пытаннă вырăна кăтартрĕ.

Малалла каятпăр. Хĕвел çунтарса ярас пек хĕртет. Çулсем çинче тусан явăнса тăрать. Малалла каякан çарсем шавлани, кĕмсĕртетни илтĕнет. Когальник шывĕ урлă каçсан, наступлени çулĕсем хĕвеланăçнелле тата хĕвелтухăçнелле пăрăнса каяççĕ. Ку вăл йăнăш мар, шăп та хĕвелтухăçнелле каяççĕ. Çапла кайни питĕ хăюллăн шухăшласа хурса çав тери чаплă пурнăçа кĕртнĕ маневр пулнă. Пирĕн мотострелковăй соединени Когальник шывĕ кăнтăр еннелле пăрăнса кайнă вырăнта хĕвелтухăçнелле çавăрăннă та Измаил хули патне чакакан тăшман группировкине хирĕç кайнă, çав хула патне пымалли вырăна хÿтĕлеме васканă. Тăшманăн темиçе дивизирен тăракан группировкине Аккерман хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре — Днестр лиманĕпе Хура тинĕс çыранĕ хушшинче—хĕскĕчпе хĕстернĕ пек хĕстерсе лартнă. Çавăнта ăна пĕтерсе тăкнă та.

Пирĕн çарсем иртнĕ кун илнĕ Болград хулинчен Измаил еннелле асфальтлă питĕ лайăх шоссе каять. Пирĕн çарсем çурçĕр-хĕвелтухăç енчен тата çурçĕр енчен пыракан çулсемпе, унтан пĕчĕк çулсемпе вырăссен Дунай шывĕ çинчи авалхи хули патнелле вăркăннă. Дунай шывĕ патне çывхарнăçемĕн çапăçусен шавĕ ытларах та ытларах илтĕнет. Унта Шлемин генералăн боецĕсем Измаил хулипе крепоçне штурмлаççĕ.

Çав хулана Суворов начар хÿтĕлекен вырăнсăр крепость тесе ят панă. Вăл çÿллĕ вырăнсен айккисене вырнаçса ларнă, çав вырăнсем Дунай патĕнче пигĕ чăнкă. Измаил хулине хĕвелтухăçпе хĕвеланăç енче кÿлĕсем хÿтĕлесе тăраççĕ, кăнтăр енчен ăна юханшыв картласа тăрать, çак вырăнта унăн сарлакăшĕ çур километра çитет.

Измаил хули хÿтĕлеме меллĕ пункт пулса тăрать. Измаил крепоçне XVIII-мĕш ĕмĕрте французсен чи лайăх инженерĕсем ертсе пынипе тунă. Çак хăй тĕллĕн пулса тăнă сооруженисемпе этем тунă сооруженисене çÿллĕ башньăллă 7 бастион тĕреклетсе тăрать. Нимĕç çак хула стратеги енчен питĕ паха пулса тăнине лайăх пĕлнĕ. Çав хула нумай çулсем пĕр-пĕринчпе хĕресленнĕ вырăнта ларать, вăл Дунай çине кĕмелли вырăна пÿлсе тăрать. Эпир Днестр шывĕ хĕрринче тăнă вăхăтрах гитлеровецсем Измаил патне çурçĕр енчен пымалли вырăнсенче çĕнĕ оборона сооруженийĕсем çав тери васкаса тунă.

Анчах та совет çарĕсем калама çук хăватлăн хĕссе пынине нимĕнле чăрмавсем те чарма пултарайман.

Вĕсем умĕнче авалхи Измаил ларнă, вĕсем умĕнче вырăс хĕçпăшалне çав тери пысăк чапа кăларнă хула ларнă, вĕсем умĕнче тĕнчери поэтсем нумайĕшĕ мухтаса çырнă хула ларнă. Наступлени тăвас шухăшпа хавхаланнă совет боецĕсене нимĕн те чарма пултарайман. Кашни часть Измаил хулине чи малтан вăркăнса кĕме тăрăшнă, çапла майпа «Измаильски» тенĕ хисеплĕ ят илме тивĕçлĕ пуласшăн çуннă.

Измаил хулине, ăна аслă Суворов илнĕ чухнехи пекех, пĕр вăхăтрах çĕр çинчен те, юханшыв енчен те пырса çапнă.

— Измаил пирĕн алăра! — терĕ штаба пырса çитнĕ полковник, — пирĕн чаçсем хулана кĕрсе кайрĕç.

Унтан, йăл кулса илсе, çапла каларĕ:

— Суворов штурмланă хыççăн Измаил çинчен Байрон çапла çырнă:

«...вăл—хăватлă юман пек, темиçе ĕмĕр хушши ÿснĕ улăп пек, хăрушă тăвăл тымарĕ-мĕнĕпе кăларса çапнăскер пек кайса ÿкрĕ...»

Тăвăл чăннипех те питĕ хăрушă пулнă. Измаилăн мăн кăмăллă стенисем умĕнче вырăс хĕçпăшалĕ çĕнĕрен чапа тухрĕ. Хĕрлĕ Çар Украинăри область центрне — Измаил хулипе крепоçне пирĕн çĕршыва таврса пачĕ.

И. ЛАПОНОГОВ.

Колхозсенчи стахановла юхăма вăйлатсах пырар, тырпул пухса кĕртес, государствăна тырă парас ĕçĕн хăвăртлăхне ӳстерер!

ЫРАШ АКСА ПĔТЕРНĔ РАЙОНСЕМ

Вăрнар районĕ хыççăн августăн 27-мĕшĕ тĕлне Чурачăк районĕ те ыраш акмалли плана тултарчĕ. План тăрăх 7.477 гектар акмалла пулнă, вăл 7.484 гектар акнă. Уйрăмăнах Яншихри «Новая сила», «Победа», «Шумашар» колхозсем 7—8 кун хушшинче ăнăçлă акса вĕçленине палăртмалла. «Победа» колхоз (председателĕ Ильин юлташ) ыраша пĕтĕмпех машинăпа акнă, пĕр эрнере акса пĕтернĕ.

* * *

Шупашкар районĕнчи колхозсем августăн 27-мĕшĕ тĕлне 7.200 гектар вырăнне 7.325 гектар акнă.

* * *

Муркаш районĕнчи колхозсем августăн 27-мĕшĕ тĕлне 7.020 гектар акнă, плана тултарнă.

* * *

Сĕнтĕр районĕнчи колхозсем 6.500 гектар вырăнне, 6515 гектар ыраш акнă.

* * *

Элĕк районĕ ыраш акмалли плана 101,8 процент тултарнă.

Гаврилов комбайнер малта пырать

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, августăн 28-мĕшĕ. (Телефонпа). МТС-ри паллă комбайнер В. Г. Гаврилов юлташ комбайнпа плана тăрăх 110 гектар тырă пухас вырăнне 120 гектар вырса пухрĕ. [illegible]

СТЕПАНОВ,
Рабочком председателĕ.

Графика пурнăçласшăн кĕрешмелле

Шăхасан районĕнчи Ухманри «Победа» колхоз çак кунсенче тырă вырса пĕтерет, кĕрхине те вĕçлет. Ку колхозра кашни кун хатĕрлев пунктне 20 вăкăрпа 70—80 центнер тырă леçеççĕ. [illegible]

[illegible]

Государствăна тырă парасси—кашни колхозăн чыслă тивĕçĕ. Государствăна тырă хĕçпăшал пекех кирлĕ. Çакна асра тытса, тырă леçмелли графика пĕр пăрккаланмасăр пурнăçласа пымалла.

А. АНТОНОВ.

Колхозниксем хĕрӳллĕ ĕçре

ВĂРНАР. Пăртаери «Рапорт» колхоз кăçал пурĕ 239 гектар ыраша [illegible] хушшинче вырса пĕтерсе [illegible]. Ыраш вырнă çĕрте 5-мĕш бригада малта тухрĕ. Ку бригадăна Е. Назаров бригадир ертсе пырать. Колхозниксем, хавхаланса ĕçлесе, ĕç нормине кулленех 160—180 процент тултараççĕ. 109 гектар çинчи тырра турттарса çапнă, государствăна обязательство тăрăх 238 центнер тырă панă, ыраш акса пĕтернĕ.

Çуртыррине 143 гектар вырнă ĕнтĕ. Иккĕмĕш бригада, жнейкăпа лайăх усă курса [illegible]

Тырпул пухса кĕртес ĕçре Грибова Александра, Евдокимова Ксения, Грибова Матрена, Андреева Анастасия, Кузнецова Ксения, Козлова Агриппина колхозницăсем кулленех нормăна икĕ хут ирттерсе тултарса пыраççĕ. Колхоз çак кунсенчех çуртыррине вырса пĕтерет.

С. КУЛАЕВСКИЙ.

„Четай" колхоз мĕншĕн юлса пырать

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, августăн 29-мĕшĕ. (Телефонпа). Ильич ячĕпе тăракан колхоз тырă вырма тытăннă малтанхи кунран пуçласах уйрăм [illegible] ĕçлесе пычĕ. Çавна пула кунта августăн 22-мĕшĕ тĕлне пур йышши тырăсене те вырса пĕтернĕ. Е. Соловьева юлташ ертсе пыракан бригада 88 гектар [illegible]. Колхозри ĕçĕн пахалăхĕ [illegible].

Çавăн пекех «Шимар» колхоз та тырпул вырса пухас ĕç ăнăçлă пырать. Ку колхозсемпе юнашар «Четай» колхозра ĕç пачах урăхла. Ку [illegible]

[illegible]

С. ШАДИН.
(Хыпар корр.)

Комсомол райкомĕсем тырă парас тĕлĕшпе воскресниксем ирттереççĕ

Комсомолăн Вăрмар, Красноармейски тата Шупашкар райкомĕсем иртнĕ канмалли кун, августăн 27-мĕшĕнче, государствăна тырă леçес тĕлĕшпе воскресник ирттернĕ. Вăрмар районĕнче воскреснике 724 çын (вăл шутран комсомолецсем 233 çын) хутшăннă. Вĕсем 216 вăкăрпа тата 508 лашапа 207 тонна тырă леçнĕ.

Çак кун пĕр «Дружба» колхозра кăна 21 вăкăрпа тата 6 лашапа тырă леçме кайнă. «Маяк» колхоз 185 центнер, «Большевик» колхоз 130 центнер тырă леçнĕ.

Çавăн пекех Красноармейски районра та канмалли кун хатĕрлев пунктне 1.261 лавпа 3.687 центнер тырă леçнĕ. Уйрăмăнах «Янмурзино», «Красное Сормово», «Красная звезда», «Волга» тата Молотов ячĕпе тăракан колхозсем воскреснике активлăн хутшăннă.

ВЛКСМ Шупашкар райкомĕ, государствăна тырă парас тĕлĕшпе икĕ хутчен воскресник ирттерсе, 237 тонна тырă леçнĕ.

Г. ПЕТРУХИН.

„Айăпсăр" çынсем

ИЕПРЕÇ. «Костер» колхоз итемĕ тĕлне çитсен, Захаров бригадир тĕл пулчĕ.

— Эсир пирĕн колхоза мĕн ĕçпе килетĕр. Уборка тĕлĕшпе мар-и? — терĕ ку иккĕленсе.

— Çапла, уборка ĕçĕпе.

— У-у-у... пирĕн колхоза никам та хурлама пултараймасть, — терĕ вăл малалла. — Ыраш вырса пĕтерейменнишĕн эпир айăплă мар, пиçсе çитеймен пирки часах вырма пуçлаймарăмăр. Тырă начарришĕн те эпир айăплă мар, çĕрĕ çавнашкал начар пулнă. Кĕрхи тырă акас ĕç вăрăма тăсăлнишĕн те эпир айăплă мар, лашасем начар. Силос хывас плана тултарайманнишĕн те эпир айăплă мар, ĕлкĕрсе пыраймастпăр... тата вăл пит кирлĕ япалах та мар пек. Мĕн васкамалли пур-ха ĕнтĕ пирĕн, ĕçсем майĕпе хăйсемех пулса пыраççĕ вĕт-ха. «Огонексем» те нимĕнех те туман-çке?

Кун пек «айăпсăр» çынпа мĕн калаçмалла-ха ĕнтĕ? Ваттисем калашле, çăвар сĕткенне сая яриччен уттарас терĕмĕр.

Колхоз правленийĕ пушах ларать. Председателĕ те, счетоводĕ те çук. Стенасем çине йĕри-тавра пăхса илетĕн те ку колхоз руководителĕ нимĕнпе те интересленменнине чухлатăн. Стена çинче пĕр хут, пĕр плакат та çук. Эрешмен картисем çеç ярăмланса çакăнса тăраççĕ. Хуçасăр çурт пек туйăнать.

Хĕвел каçалалла сулăнсан, колхоз председательне Артемьев юлташа та курма лекрĕ. Уборка пирки сăмах хускатсан, вăл та бригадир «юрринех» юрлать. Вăл хăй ертсе пыракан «Костер» колхозăн «çитĕнĕвĕсем» çинчен каласа кăтартма тытăнчĕ.

— Ыраш вырма августăн 10-мĕшĕнче пуçăнтăмăр. 11 гектар çинчен кĕлте турттарнă. Государствăна 5 центнер тырă панă. Кĕрхи тырă акма августăн 18-мĕшĕнче пуçланă, сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне акса пĕтеретпĕр-и, тен?! 6 лаша тырă акнă çĕрте, 2 лаша турттарнă çĕрте ĕçлеççĕ.

— Лашасем сахал пулсан, кӳлме юрăхлă вăкăрсем, ĕнесем пур-и сирĕн?

— Пур та, кам-ха вĕсене вĕрентекенни, —тет тарăхнă сасăпа председатель.

Çак руководитель ятне тытса тăракан çынсем, хăйсен айăпне йышăнса, кĕске вăхăтра татăклă улшăну тума шутламаççĕ. Ыраш вырса пĕтермен, тулă пулса çитнĕ, хăçан вырма пуçăнасси паллă мар. Кĕрхи ака вăрăма тăсăлнăшăн та хуйхăрмаççĕ. Çитес çулта тырă начар пулсан, татах çĕре айăпламалла пулать пуль вара? Майракаллă шултăра выльăхсемпе усă курма пĕлмеççĕ. Колхозниксене сдельщина тăрăх ĕçлеме организацилемен. Çавăнпа та колхозниксем хĕвел çӳле хăпарса çитсен çеç ĕçе тухаççĕ, хĕвел анса лариччен чылай малтан каялла кĕреççĕ. Колхозра пĕрлешӳллĕ столовăй та çук.

Колхозăн пĕр жнейка, икĕ молотилка пур. Вĕсемпе пĕринпе те усă курмаççĕ. Правленире ĕçлекенсем критикăна юратмаççĕ, часах вĕриленсене каяççĕ.

Е. КАРТАШОВ.

НИКОЛАЙ АЛЕКСАНДРОВИЧ ЩОРС
(Вăл вилни 25 çул çитнĕ тĕле)

Украина халăхĕн чысĕшĕн, никама пăхăнманлăхĕшĕн тата ирĕклĕхĕшĕн çапăçнă чаплă çынсем хушшинче Николай Александрович Щорс калама çук пысăк вырăн йышăнса тăрать. Вăл историе халăх геройĕ пулса, Украинăра Хĕрлĕ Çар тунă çын пулса кĕрсе юлчĕ. Сталин юлташ ăна «Украинăри Чапаев» тесе ят панă.

Щорс 1895 çулта Чернигов кĕпĕрнинче, Сновск (халĕ Щорс хули) чугун çул поселокĕнче паровоз машинисчĕн çемьинче çуралнă. Киеври çарпа фельдшер шкулĕнчен вĕренсе тухсан, вăл учительсен семинарине вĕренме кĕнĕ, унтан университета куçма ĕмĕтленнĕ. Анчах та тĕнчери пĕррремĕш вăрçă пуçланнă, Щорса артиллери дивизионне илнĕ, вăл вара фронта кайнă. Вăрçă вăхăтĕнче вăл прапорщиксен шкулĕнчен вĕренсе тухнă.

1918 çулхи январьте Николай Александрович фронтран хăйĕн тăван поселокне Сновска таврăннă. Çав вăхăтра Украина хăйĕн историйĕнчи чи йывăр тапхăра пурăнса ирттернĕ. Германи империалисчĕсем, сутăнчăк Центральнăй Рада çине таянса, Украинăна оккупацилеме пуçланă, ăна хăйсен колонийĕ тăвасшăн пулнă.

Ют çĕршыв захватчикĕсене тата вĕсене пулăшакансене хирĕç пĕтĕм Украина халăхĕ сиксе тăнă. Рабочисемпе хресченсене хăйсен тăван çĕршывĕн ирĕклĕхĕшĕн кĕрешме çĕклекенсенчен пĕри—Щорс пулнă.

Вăл Сновскри железнодорожниксенчен пысăках мар партизанла отряд тунă. Унăн отрячĕ часах 300 çынна çитнĕ. Ун чухне вара вăл нимĕçсен яланхи çарĕсемпе çапăçма пуçланă, вĕсене вăйлăн пырапыра çапнă.

Щорс партизанĕсен чапĕ пĕтĕм Çурçĕр Украина тăрăх кĕрлесе кайнă. Ун патне хăйсен ирĕкĕпе нумай çын пыра пуçланă.

1918 çулта апрель уйăхĕн вĕçĕнче Щорса Мускава чĕнсе илнĕ. Щорс унта Украинăра восстанисен юхăмĕ мĕнле ăнăçусем туни çинчен каласа панă, ăна вара малашне мĕнле ĕçлемеллине кăтартса панă.

Нимĕçсем оккупациленĕ Украинăпа Совет Российĕ хушшинчи никам аллинче те тăман вырăна таврăнсан, Николай Александрович хăйсен ирĕкĕпе пынă партизансенчен Хĕрлĕ Çарăн яланхи чаçĕсене тума пуçланă.

Богульски полк пуçĕнче тăрса, Щорс 1918 çулхи ноябрь вĕçĕнче Унечăран легендăри пек поход пуçласа янă, Чернигов патĕнче Гайдамаксене аркатса тăкнă, Десна шывĕ урлă каçнă. 1919 çулхи февралĕн 5-мĕшĕнче вара Киева туртса илнĕ. Çавăн хыççăн Николай Александрович Украинăри 1-мĕш повстанчески дивизин командирĕ пулса кĕрешнĕ.

Вăрçă ĕçĕсем хушшинчи кĕске вăхăтсенче Щорс ирĕке кăларнă территорире совет влаçĕн органĕсене тунă, вĕсене çирĕплетнĕ. Вăл çак ĕçре те большевиксен питĕ чаплă организаторĕ пулса тăнă.

1919 çулхи август уйăхĕнче Украинăна белополяксем вăркăнса кĕрсе кайнă, вĕсем, петлюровецсем пулăшнипе, Украина республикине тытса илме хапсăннă. Щорс 44-мĕш дивизи пуçĕнче çав захватчиксене хирĕç тухнă. 1919 çулхи августăн 30-мĕшĕнче Коростень патĕнчи çапăçура, яланхи пекех малта тăнă чухне, Николай Александрович герой вилĕмĕпе вилнĕ.

Совет халăхĕ Щорс ятне хисеплесе асра тытать. Щорсăн чаплă ĕçĕсем пирки легендăсем, юрăсем хывнă. Хальхи вăхăтра унăн паттăр сăнарĕ Хĕрлĕ Çарăн боецĕсемпе командирĕсене нимĕç захватчикĕсемпе çапăçма хавхалантарса тăрать.

Францири вăрçă ĕçĕсем

Союзниксен экспедицилле вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ пĕлтерни

ЛОНДОН, августăн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедицилле вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ паян пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

Союзниксен Парижран кăнтăртарахра Сена шывĕ урлă каçнă çарĕсем Марна шывĕпе Сена шывĕ хушшипе хĕвелтухăçнелле наступлени туса пыраççĕ. Çак секторăн кăнтăрти участокĕнче союзниксен чаçĕсем Труа хулинчен малалла иртсе кайнă.

Париж районĕнче августăн 27-мĕшĕнче тăшман Шампиньире хирĕç тăрса çапăçнă. Булонь вăрманне нимĕçсенчен тасатнă, анчах та тăшманăн пĕр-пĕринчен татăла-татăла кайнă ушкăнĕсем Париж хулине кăнтăр-хĕвеланăç енче пĕрлешсе тăракан Медон вăрманĕнче çаплах хирĕç тăраççĕ-ха.

Парижпа Мант-Гассикур хули хушшинче тăшмана пĕтерсе тăкас тĕлĕшпе Пуасси çывăхĕнче çапăçаççĕ. Союзниксен Понт-Одмер хули енчен хĕвелтухăçнелле куçса пыракан çарĕсене хирĕç тăшман хытă тăрать. Лонд вăрманне тăшман çарĕсенчен тасатса пĕтернĕпе пĕрех.

Юлашки 24 сехет хушшинче союзниксен темиçе çĕр самолечĕ тăшманăн Сена шывĕн хĕвеланăç хĕрринче, Руан хулинче пĕр çĕре пухăнса тăнă çарĕсем çине тата машинисемпе базисем çине бомбăсем пăрахнă.

Авиацин ытти соединенийĕсем Сена вăрринчен пуçласа Люксембург таран сарăлса выртакан аслă территори çинчи, Германири тата Данири объектсем çине бомбăсем пăрахнă, вĕсем нумай паровозсем, çар машинисем тата темиçе çĕр чугун çул вагонне пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ.

ФРАНЦИ ÇЫРАНĔ ПАТĔНЧИ ТИНЕСРИ ÇАПĂÇУ

ЛОНДОН августăн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Тинĕс-çар министерстви çапла пĕлтерет: Англипе Америка флочĕн Франци çыранĕ çывăхĕнче кĕрешекен çăмăл карапĕсем августăн 27-мĕшĕнче ирхине д'Антифер сăмсахĕ çывăхĕнче Германин 8 хурал судни не тĕл пулнă. Тăшманăн 4 карапĕнчен кая мар путарнă пулмалла. Тăшманăн пĕр судни çыран хĕррине сирпĕнсе тухнă. Çав çапăçу вăхăтĕнче Германин çыран хĕрринчи батарейисем союзниксен суднисене пеме тытăннă, анчах та вĕсене сиен тăвайман.

НИМĔÇ САМОЛЕЧĔСЕМ ПАРИЖА ТАПАННИ

ЛОНДОН, августăн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Парижри радио пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер нимĕçсен авиацийĕ Парижа тапăннă. Латинла квартал çине, хĕвелтухăç вокзалĕн районĕ çине, Монмартр, Монруж, Булонски вăрман районĕсем çине тата ыттисем çине те пуринчен нумайрах бомбăсем пăрахнă. Граждăнла халăх хушшинче вилнисемпе аманнисем пур. Сывлăшран тапăнни пурлăх енчен те сиен кӳнĕ.

Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ пĕлтернисем

ЛОНДОН, августăн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи çарĕсен штабĕ çапла пĕлтернĕ: Кăнтăр Францире американецсемпе французсен наступлени тăвакан çарĕсем темиçе тĕлте Рона шывĕ патне çитнĕ, Альпы тăвĕсен районĕнче вĕсем Итали чикки патне çитнĕ. Çĕнĕрен темиçе паха хула туртса илнĕ, çав шутра — Арль, Тараскон тата Авиньон.

Тулон хулинче француз çарĕсем тинĕс арсеналне тата хулан хĕвелтухăç енчи пайне тытса илнĕ. Марсель хулинче тăшман хăшпĕр вырăнсенче çеç хирĕç тăрать.

Союзниксен флочĕ тăшманăн Канн районĕнчи тата Тулонран хĕвеланăçнерехри Мандрие сăмсахĕ çинчи батарейисене тинĕсрен пенĕ. Тупăсемпе пени питĕ ăнăçлă пулнă.

5-мĕш арми фронтĕнче Флоренцире нимĕнле улшăну та пулман. Августăн 24-мĕшĕнче союзниксен çарĕсем Флоренцирен хĕвелтухăçнерехре тата Арно шывĕн кукринчи тусем хушшинче тăшман хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкнă. Çакна пула акăлчансен 8-мĕш армийĕн чаçĕсем тусем хушшинче çӳреме йывăр çулсемпе 3 миля малалла кайнă. Тăшман каялла чакса пырать.

Тибр шывĕн тури тăрăхĕнчи улăхра тăшман Монтегольо хулинчен хĕвелтухăçнерехри позицийĕсене хăварнă.

Союзниксен авиацийĕ Брно çывăхĕнчи икĕ авиаци завочĕпе аэродрома тата Простееври (Чехословаки) аэродрома тапăннă.

Союзниксен авиацийĕн ытти соединенийĕсем тăшманăн Çурçĕр Италири объекчĕсене пыра-пыра çапнă.

* * *

ЛОНДОН, августăн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи çарĕсен штабĕ паян пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

8-мĕш армин Англипе Инди чаçĕсем Италире Флоренцирен хĕвелтухăçнерехре тата Арно шывĕпе Тибр шывĕн тури тăрăхĕсен икĕ айккинчи тусем хушшипе «Гот линийĕ» патнелле куçса пынă.

Кăнтăр Францире 8-мĕш арми районĕнче француз çарĕсем Тулон хулине тăшмантан тасатса çитернĕ тата Си-Фур укреплениййĕсене, çавăн пекех тата Брегайонпа Марвиза районĕнчи укреплениесене тытса илнĕ. Тăшман çурутрав çинче çеç хирĕç тăрать, унта вăл хуларан кăнтăртарахра тата Си-Фуртан кăнтăртарахри фортра хирĕç тăрать. Марсель хули районĕнче тăшманăн хирĕç тăракан ушкăнĕсене пĕтерсе тăкас ĕçре ăнăçусем тунă. Ривьера çыранĕ тăрăх Антиба патĕнчен майĕпен малалла куçса пыраççĕ. Союзниксен çарĕсене тăшман артиллерирен перет, вĕсен тата минăсем хурса тухнă анлă вырăнсем урлă каçма тивет.

Августăн 26-мĕшĕнче йывăр бомбардировщиксен соединенийĕсем, тăшмана хирĕç кĕрешес ĕçре Румыни правительствин çарĕсене пулăшса пынăскерсем, Бухарест районĕнчи аэродромра тата Германин Бухарест районĕнче пухăнса тăнă çарĕсене, çавăн пекех тата Джурджу районĕнче Дунай шывĕ урлă хывнă каçса атакăланă. Бомбардировщиксене хӳтĕлесе пынă истребительсем çав объектсен районĕсене пыра-пыра тапăннă. Йывăр бомбардировщиксен ытти соединенийĕсем Çурçĕр-хĕвелтухăç Италири тата Кăнтăр-хĕвеланăç Югославири чугун çул кĕперĕсемпе виадуксене пыра-пыра тапăннă. Тактикăллă авиаци çапăçусен районĕнче çĕр çинчи чаçсене пулăшса пынă. Кăнтăр Францире тата Çурçĕр Италире артиллери позицийĕсене, шоссе çулĕсене тата чугун çулсене пыра-пыра тапăннă. Союзниксен самолечĕсен ытти соединенийĕсем Югославири вăрçă объекчĕсене пыра-пыра тапăннă.

ЧЕРЧИЛЛЬ БОНОМИПЕ ТĔЛ ПУЛСА КАЛАÇНĂ

ЛОНДОН, августăн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Англин информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, августăн 22-мĕшĕнче Римра Черчилль Италин премьер-министрĕпе Бономипе тĕл пулса калаçнă.

Грецин ирĕклĕх çарĕн çапăçăвĕсем

ЖЕНЕВА, августăн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Илнĕ хыпарсем тăрăх, Грецин ирĕклĕх халăх çарĕн отрячĕсем оккупантсемпе вĕсен тарçисене хирĕç хытăрах кĕрешме пуçланă. Халăх çарĕ хăй нимĕçсене хирĕç наступлени туни нимĕçсен наступленине вăйсăрлатнă. Хăшпĕр участоксенче нимĕçсем каялла чакаççĕ, пысăк çухатусем тӳсеççĕ. Çапла, акă, Карпениcион патĕнчи çапăçура тăшманăн 1.400 салтакĕпе офицерне çити пĕтнĕ.

Нимĕçсем вырăнти халăха тискеррĕн тыткалаççĕ. Вĕсем халăх пурăнакан пунктсене çунтара-çунтара, сирпĕнтере-сирпĕнтере яраççĕ, халăха вĕлерсе пĕтереççĕ. Фосталийăна оккупациленĕренпе вĕсем 275 яла çунтарса янă. 10.613 çын çуртсăр-йĕрсĕр тăрса юлнă.

Рабочи класăн фронта пулăшас ĕçри паттăрлăхĕ

Гитлерла захватчиксем, Совет Союзне хирĕç вăрçă пуçланă чухне, пирĕн совет промышленноçĕ хальхи тапхăрти вăрçă техникине массăллăн кăларас задачăна пурнăçа кĕртме пултараймĕ, пирĕн транспорт вăрçă хатĕрĕсене турттарса ĕлкĕреймĕ, тесе шутланă. Вĕсем пирĕн ялхуçалăхĕ çарпа çĕршыв валли апат-çимĕç продукчĕсем, промышленноçа — чĕртаварсем çителĕклĕ тăратма пултарас çукки çине шанса тăнă. Анчах та фашистсен планĕсем пĕтĕмпех путланса ларчĕç.

Совет халăхĕ, Сталин юлташ чĕннипе, хăйĕн чыслăхĕпе ирĕклĕхĕшĕн, тăван çĕршывăн никама пăхăнманлăхĕшĕн кĕрешме улăп паттăр пек хăватлăн çĕкленчĕ. Пĕтĕм çĕршыв пĕр боевой лагерь пулса тăчĕ. Большевиксен партийĕ рабочи класа тăван çĕршыв оборонин интересĕсемшĕн хастарлăн кĕрешме хавхалантарчĕ. Фронта тивĕçлĕ пек, вăй-хăвата шеллемесĕр ĕçлер, — çапла ответлерĕ рабочи класс, парти чĕнсе каланине саламласа. Совет рабочийĕсем хăйсем тăшманпа кĕрешме хатĕр пулнине, фашистла нимĕç захватчикĕсене пĕтĕм чун-чĕререн курайманнине, тăван çĕршывшăн вăй-хала шеллемесĕр ĕçлеме хатĕррине çирĕплетсе пачĕç.

Пирĕн халăх фронт валли хĕçпăшалсем, боеприпассем, обмундировани тата апат-çимĕç массăллăн туса кăларас тата вĕсене тивĕçлĕ çĕре вăхăтра çитерес тĕлĕшпе паллă çитĕнӳсем турĕ. Совет рабочийĕсем, колхозниксем, интеллигенци, хамăрăн çĕршывăн халăх хуçалăхне фронт интересĕсене пăхăнтарса, Хĕрлĕ Çар валли çĕнтерӳ тума мĕн кирлине ытлăн-çитлĕнех парса тăраççĕ.

Вăрçă вăхăтĕнче танксем, артиллери хĕçпăшалĕ туса кăларасси темиçе хут ӳснĕ. Самолетсем туса кăларасси виçĕ хут ытларах çĕкленнĕ. Тĕрлĕ боеприпассем 1943 çулта 1942 çулхинчен пĕрре çурă хут ытларах туса кăларнă.

Рабочисем государство планĕсене тултараççĕ тата ирттерсе тултараççĕ. Канашри вагонсем юсакан завод коллективĕ иртнĕ 1943 çулта вăрçăчченхи çулхинчен тăватă хут ытларах продукци туса кăларнă. Нумай предприятисем хăйсен ĕçне кăçал татах та лайăхлатрĕç. Володин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен завод, производствăн пĕр пайне поточнăй метод çине куçарнине пула, производство технологине çĕнетнине пула, çур çулхи плана чылай ирттерсе тултарнă. Канашри депо коллективĕ социализмлă ăмăртăвăн май уйăхĕнчи итогĕсем тăрăх Хусан чугун çулĕ çинче пĕрремĕш вырăн йышăннă. Виççĕмĕш уйăх ĕнтĕ вăл куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялава хăй аллинче тытса тăрать.

«Совет Союзĕнчи рабочисем, — тенĕ Сталин юлташ, — мирлĕ строительство çулĕсенче вăйлă та хăватлă социализмлă промышленность туса хунăскерсем, Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче фронта пулăшас тĕлĕшпе вĕресе тăракан хĕрӳллĕ ĕçе сарса ячĕç, ĕçре чăн-чăн паттăрлăх кăтартрĕç».

Пирĕн паттăр рабочи класс Хĕрлĕ Çар валли тĕнчере чи лайăх артиллери, танксем, самолетсем туса пама пултарчĕ. Йывăр танксем, хăй тĕллĕн çӳрекен тупăсем, Ильюшин штурмовикĕсем, Петляковăн бомбардировщикĕсем, Яковлевпа Лавочкинăн истребителĕсем, гварди миномечĕсем, танксене хирĕç кĕрешмелли артиллери тата ыттисем те, — çаксене пурне те совет предприятийĕсенче тăваççĕ.

Çĕршывра çĕнĕ заводсем, фабрикăсем, электростанцисем, чугун çулсем тăвасси анлăн сарăлса пычĕ. Вăрçă вăхăтĕнче темиçе çĕр предприяти ĕçе кĕчĕç. 1942 çулта Магнитогорскри 5-мĕш номерлĕ домнăна ĕçе кĕртнĕ. Вăл талăкра 1.500 тонна металл пама пултарать. 1943 çулта Уралти пĕтĕм металлурги завочĕсенчен ытларах металл пама пултаракан 6-мĕш номерлĕ домна ĕçе кĕнĕ. Челябинскри, Нижний Тягилри домнăсем металл пама пуçланă. Карагандăра, Уралта шахтăсем ĕçлеме тытăннă, чугун çулсем ĕçе кĕнĕ.

Кăмрăк кăларакан рабочисем пысăк çитĕнӳсем тунă. 1943 çулта кăмрăк кăларакан бассейнсем пурте государство планне ирттерсе тултарнă.

Хура металлурги тата çĕр-кăмрăк промышленноçĕсен çитĕнĕвĕсем Хĕрлĕ Çар валли вăрçă техники туса кăларассине малалла ӳстерсе пымалли никĕс пулса тăраççĕ.

Пирĕн çĕршыври рабочи класс тăрăшнипе оборона тĕлĕшĕнчен кирлĕ заводсене ĕçе кĕртнĕ. Çапла, кăçал Уралта автомобильсем тăвакан завода ĕçе янă.

Пирĕн социализмлă халăх хуçалăхĕ тунă çитĕнӳсен никĕсĕ — вăл халăхсен патриотизмĕ вăйлăн çĕкленнинче, ĕççыннисен творчествăллă пултарулăхĕ ӳссе пынинче пулать. Пирĕн çĕршыври ĕççыннисем Отечественнăй вăрçă çулĕсенче хăйсем ĕç çине социализмла пăхнине кăтартса пачĕç. Икĕ çул каярах, Сталин юлташăн майăн 1-мĕшĕнче кăларнă приказне ответлесе, Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăрту пуçланчĕ. Вăл халăхсен массăллă юхăмĕ, совет халăхĕ хăйĕн тăван çĕршывне чĕререн юратнине кăтартакан юхăм пулса тăчĕ.

Пирĕн республикăри чылай предприятисен коллективĕсем те Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура мала тухаççĕ. Якунин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен завод 1943 çулхи ăмăртура ВЦСПС-па Наркоматăн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне виçĕ уйăх хушши, Оборонăн Государственный Комитечĕн Хĕрлĕ ялавне 8 уйăх хушши хăй аллинче тытса тăнă. Завод коллективĕн çитĕнĕвĕсене партипе правительство тивĕçлипе хакларĕç: завода Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе наградăланă. Володин тата Слуцкий юлташсем главнăй инженерсем пулса ĕçлекен заводсем, кăçалхи июньпе июль уйăхĕсенче ăмăртура мала тухса, иккĕмĕш преми илме тивĕçлĕ пулчĕç.

Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăрту пуçланнăранпа, икĕ çул хушшинче, промышленноçра ĕç тухăçлăхĕ 40 процент ӳснĕ.

Рабочи класăн пуçарăвĕ, вăл фронта пулăшассине вăйлатас туйăмпа пурăнни производство технологине лайăхлатас, производствăна тĕрĕс организацилес, материалсемпе топливăна перекетлес, резервсемпе туллин усă курас, стахановла юхăмăн çĕнĕ формисене сарас ĕçре пысăккăн палăрать.

Çак çитĕнӳсене тунă çĕрте стахановла юхăм паллă вырăн йышăнса тăрать. Стахановла юхăм мирлĕ строительство çулĕсенче социализмлă халăх хуçалăхне çĕнĕ пусăма çĕклеме пулăшрĕ. Вăрçă вăхăтĕнче стахановла юхăм пирĕн Хĕрлĕ Çара техника ытлăн-çитлĕн парса тăрас ĕçре паллă вырăн йышăнчĕ. Вăрçă вăхăтĕнчи стахановецсем вĕсем — тылри гвардеецсем. Акă, сăмахран, Канашри вагонсем юсакан заводри е республикăри ытти предприятисенчи стахановецсене илер. Вагонсем юсакан заводри токарь Будкина юлташ, виçĕ станокпа ĕçлесе, нормăна 450 процент тултарать. Çав заводрах механически цехри фрезеровщик И. Кривцов юлташ, икĕ станокпа ĕçлесе, нормăна 450 процент тултарать. Республикăри пĕр заводри К. Иванов юлташ, хăйĕн ĕç вырăнне рационализациленĕ май, нумай пулмасть ĕçе кĕртнĕ çĕнĕ нормăна 500 процент таран пурнăçа кĕртет. Кун пек примерсене çĕршерĕн илсе кăтартма пулать.

Вăрçă çулĕсенче предприятисенче поточнăй метод вăйлăн сарăлчĕ. Вăл ĕç тухăçлăхне татăклăнах ӳстерме май парать. Çапла, Володин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен заводра поточнăй методпа ĕçлеме тытăннă хыççăн продукци туса кăларасси чылай ӳснĕ. 1944 çулхи январь уйăхĕнче пĕр рабочи продукци туса кăларасси, 1943 çулхи январь уйăхĕпе танлаштарсан, 264 процент ӳснĕ, продукцин хăйне ларакан хакĕ 58 процент йӳнелнĕ. Браксене пĕтĕмпе тенĕ пекех пĕтернĕ. Завод руководителĕсем тунă çитĕнӳсемпе лăпланса лармаççĕ, вĕсем хăйсем умне продукци туса кăларассине виçĕ хут ӳстерес задача лартнă.

Канашри вагонсем юсакан заводра ĕçе мĕнле организациленине пăхса тухни ĕç тухăçлăхне ӳстерме татах та пысăк майсем пуррине кăтартса пачĕ. Вуншар рабочи темиçе станокпа ĕçлеме тытăннă, нумай участоксене çĕнĕлле йĕркелесе, ĕç вăйне урăх çĕре куçарнă. Забиякин юлташ начальник пулса ĕçлекен цехра, ĕçе çĕнĕлле организациленине пула, 53 çынна урăх ĕçе куçарнă, продукци кăларассине 40 процент ӳстернĕ. Пирĕн çĕршыври рабочисем изобретени тата рационализаци енĕпе сĕнӳсем нумай параççĕ. Якунин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен заводра рационализаципе изобретени сĕнĕвĕсене пухмалли уйăхлăхра темиçе вуншар сĕнĕве ĕçе кĕртнĕ: çав сĕнӳсем нумай пин тенкĕ перекетлеме май параççĕ.

Çĕршывра комсомолецсемпе çамрăксен бригадисем хушшинче сахал йышпа ĕçлесех продукци ытларах туса кăларассишĕн ăмăрту сарăлса пырать. Нумай бригадăсем ĕç кунĕпе туллин усă курнине пула, ĕçе механизациленине пула урăх участоксенче ĕçлеме çĕршер рабочие куçарнă. Шупашкарти пĕр заводра Шимлых юлташ бригади икĕ çынна, çавăн пекех Ханина тата Яковлева бригадисем те икшер çынна урăх ĕçе куçарнă. Кун пек примерсене тата та нумай илсе кăтартма пулать.

Отечественнăй аслă вăрçă çулĕсенче промышленноçра хĕрарăмсем ытларах ĕçлеме пуçларĕç. Вĕсем хăйсен хастарлăхне кулленхи ĕçре кăтартса параççĕ. Канашри вагонсем юсакан заводри Забиякин юлташ начальник пулса ĕçлекен цехри токарь Наталия Егорова икĕ-виçĕ станокпа ĕçлесе нормăна 400 процент таран тултарать. Егорова юлташ пек хастарлăн ĕçлекенсем пирĕн çĕршывра пинĕ-пинĕпе шутланаççĕ.

Нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă районсенчи рабочисемпе инженерла-техникла работниксем те фронта ытларах та ытларах пулăшу параççĕ. Вĕсем, нимĕç захватчикĕсем ишĕлтернĕ предприятисене юсаса, продукци кăларассине ӳстерсе пыраççĕ.

Анчах республикăри пур предприятисемпе артельсем те хăйсен задачисене тивĕçлипе пурнăçа кĕртсе пыраймаççĕ-ха. Промышленноçпа промысла кооперации руководителĕсем кăçал малтанхи уйăхсенче иртнĕ çулта тунă çитĕнӳсене çирĕплетсе хăвараймарĕç. Вырăнти промышленность Халăх Комиссариачĕ тата çавăн пекех промысла кооперацийĕ те государство планне пурнăçласа пымасть. Ку ĕçе лайăх тишкĕрсе пăхсан, производство планне тултарманни пĕтĕмпех çаврăнăçусăр ĕçлениненчен килнине куратпăр. Акă пĕр-икĕ факт илсе пăхар. Хăшпĕр предприятисем топливăпа электроэнергине тирпейсĕр тыткалаççĕ. Çапла, Улатăрти паровозсем юсакан заводра 1943 çулта 60.000 тенкĕлĕх топливо ытлашши расходланă. Канашри вагонсем юсакан заводра простойсем пулнă пирки çултан çулах тăкаксем нумай пулаççĕ. Кăçалхи пилĕк уйăх хушшинче çав тăкаксем 100.000 станок-сехет чухлĕ пулнă. Çав вăхăтра пĕр миллион тенкĕлĕх ытла продукци туса кăлармалла пулнă.

Промысла кооперации промышленноçĕ те хăйĕн производство планне тултарса пымасть. Мĕншĕн тесен юлашки вăхăтра партипе советăн вырăнти организацийĕсем промысла кооперации артелĕсене ертсе пырас ĕçе сӳрĕклетнĕ, вăрçă вăхăтĕнчи йывăрлăхсене сирме татăклă мерă йышăнман.

Совет Союзĕн халĕ фронтпа çĕршыва çĕнтерӳ тума мĕн кирлине пĕтĕмпех парса тăма пултаракан вăрçă хуçалăхĕ пур. Халĕ, вăрçăн татăклă тапхăрĕнче, тылри ĕççыннисен хăйсен пĕтĕм вăйне фронта пулăшнă çĕре мобилизацилемелле. Промышленноçпа транспорт работникĕсен паянхи хĕрӳллĕ задачи вăл — хăшпĕр отраслĕсемпе предприятисем юлса пынине пĕтересси, ĕç тухăçлăхне, çапла вара продукци туса кăларассине малалла ӳстересси пулать.

Паттăр Хĕрлĕ Çар аманнă нимĕç тискер кайăкне хăйĕн шăтăкĕ патне—вилĕм шăтăкĕ патне хăваласа пырать. Тылри ĕççыннисен тивĕçĕ — пĕтĕм вăйсене мобилизацилесе, нимĕç захватчикĕсене тĕпĕ-йĕрĕпех аркатса тăкма Хĕрлĕ Çара мĕн кирлине пурне те туса парасси пулать.

М. ТИТОВ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместитель секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин — 0—23.

Типография № 1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2, ф. б. 59×42 п. л. Тираж 16.000 экз.

НТ 00660